**Çут тĕнче - ман кермен**

Шурă чĕнтĕрлĕ чалт манăн чаплă кермен!
Катан пир сармине айтарса киленетĕп.
Ман кермен кĕмĕлтен,
Ман кермен чĕлтĕрккe!
Вăшт та вашт вашкăртса
Çăлтăрсем сирпĕтетĕп!

Сар çу сапнă урайлă ман ирĕк кермен!
Шăнкăрти шывсемпе тасалать вăл пĕр хушă.
Ман кермен пĕлĕтрен,
Ман кермен хĕвелтен,
Ман кермен кĕреки
Чунсăрсемшĕн çеç пушă!

Мерчен виткĕçлĕ ман капăр-капăр кермен –
Çумăрпа çăвăнать, çиçĕмпе çиçкĕнет вăл!
Ман кермен кĕленче,
Ман кермен тĕлĕнче
Кĕрлесе ахăрать
Аслатиллĕ çил-тăвăл!

Манăн тулăх кермен хĕрлĕ, шурă, кĕрен,
Куççене шартарать манăн хăтлă керменĕм.
Хăмла речĕн шалчи
Ман кермен хуралçи,
Ман кермен тăрринче –
Вĕççĕр ĕмĕт элемĕ!

Чаплăран чаплăрах манăн аслă кермен,
Ман кермен пуянран пуянрах та чăп тулăх!
Ман кермен пăхăртан,
Ман кермен ылтăнран,
Ман кермен мăччинче –
Хĕвелпе çутă уйăх!

*Станьял, В. Çут тĕнче – ман кермен / В. Станьял // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 425.*